ССР Сойузне индустриализацилес вăйăсенчен пĕри вăл—малта шыракан капиталисмăла çĕршывсене техника тĕлĕппен хуçа çитсе иртсе кайасси пулнă. Пĕрремĕш тата иккĕмĕш пăтăлтекăсенче Совет промышленнăçĕн çак тери хăвăрт ĕçсе пырса пирĕн çĕршыва «ытла отрăçăсем тĕлĕппе «Европăра тата тĕнчере пĕрремĕш вырăна кăларчĕ. Пĕтĕм промышленнăç продукцийĕ тĕлĕппе ССР Сойузĕ 1935 çулта Европăра пĕрремĕш, тĕнчере иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Машинăсем тăвас тĕлĕппе, те ССР Сойузĕ Европăра пĕрремĕш, тĕнчере иккĕмĕш вырăн йышăнса тăрат. Тракторсем тăвас тĕлĕппе ССР Сойузĕ Европăра пĕрремĕш вырăн, комбайнсем тăвас тĕлĕпе тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Електричествă вăйĕ тăвас тĕлĕпе пирĕн çĕршыв 1913 çулта вунпиллĕкĕмĕш вырăнта тăнă, халĕ вăл Европăра иккĕмĕш, тĕнчере виççĕмĕш вырăнта тăрат. Чукун шăратас тĕлĕппе ССР Сойузĕ Европăра пиллĕкĕмĕш вырăнтан пĕрремĕш вырăна, суперфосфат тăвас тĕлĕппе Европăра, вулăтăмăлăн вырăнтан пĕрремĕш вырăна тухрĕ. ССР Сойузĕнче тăвакан машинăсен пĕтĕм хисеп, пур капиталĕсемăн çĕршывсем тăвакан хисепне пăсăл, пиллĕкĕмĕш пайĕнчен пĕрин чухăл йышăнать. Тракторсем тăвас тĕлĕппе ССР Сойузĕ пĕтĕм капиталисмăлă тĕнче туса кăларнинчен пиллĕкĕмĕш пайне йышăнать, мĕн пур капиталисмăлă çĕршывсем тунинчен 2,5 хут ытларах комбайн туса кăларать.

Революцинчен Россипăра тăвакан продукци чи пысăк пайĕ халăхуçалăх продукцийĕсем-пулнине курсаттăмăр епĕр. Промышленнăç-продукцийĕ пĕтĕм продукцине тăвасрен пилĕк пайĕнчен икĕ пайĕнче çеç йышăнса тăнă. 1937 çулта промышленнăç продукцийĕ (илăн тăрăх) ССР Сойузĕн халăх хуçалăхĕн пĕтĕм продукцийĕн 77,4 процентĕ тухăç пулса тăрат. Ку вăл социализăмăн халăхуçалăхĕ пит-хитă-ĕçĕ, тырăхут тухăçлăх хытă ĕçĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕçĕтĕс ĕç вăйăлăнăнă т. ыт. тухăç çавăн пек пулса тăрат.

Боļшевиксен партийĕ йĕртсе пынине, продукцине, ăсхарипăсене, социализăм çĕршывĕ-ытти тăшманĕсене хирĕç кăларăпăр кĕрешсе, рабочисемпе ĕçхресченсем тăвакан çĕршывăмăра çапла индустрилăх вăйлă çĕршыв туса хучĕç.

Суйлавçăсен списокĕсем

ШĂХАСАН („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Малтан шута илсе тухнă тăрăх районта 19.979 суйлавçă, вĕсенчен 11.058 хĕрарăм шутланаççĕ. Çакăн чухлĕ суйлавçăсене Аслă Совет суйлавне иртерме пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитересси—чи ответлă тата чаплă задачă пулса тăрать.

Кунта 18.821 суйлавçăна суйлав саккуне вĕренмели кружоксене йăвăрланă. Малтанхи вăхăтра колхозсенче хута лайăх пĕлекенниссем пе сахал пĕлекенсем тата пачах пĕлменниссем те пĕрлех вĕренĕç. Çавăн пирки вĕренӳ пахалăхĕпе вĕренме сĕресси те çителĕксĕр пулнă. Халĕ ку йăнăша тӳрлетес, пайăнки куна 383 кружок организацине. Çапах та вĕренĕве тĕплĕн йĕркелесе çитереймен. Кружоксене 40—50 çынтан организацилене пулсан, занятине 20—30 çын çеç çӳреççĕ. Пĕчĕк ача амăшĕсене тата кус курманнисене суйлав саккуне йăнлантарса вĕрентес ĕçе çителĕксĕр организацилĕ.

Уйрăм йăлсовечĕсенче суйлав саккуне вĕренес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку шута Çĕнĕ Чулкасси, Хурамал, Сител йăлсовечĕсене кӳртме пулать. Чулкасси йăлсовечĕ çак ĕçе мĕн пур куçтурлă вăя мобилизацинĕ. Вĕсен 24 кружок ĕçлет, вĕренӳ пахалăхĕ те начар мар. Суйлавçăсен кружокĕнче хăйсене кирлĕ ыйтусемпе хытă интересленеççĕ.

Районра 34 суйлав участки организацинĕ. Анчах участкăсенчи комиссси членĕсене суйлава малтан хăй списка тăратса сĕнĕ. Вăл спискăра пăсăлса кайнă сăнсем: Волков—йăлсовет председателĕ, Анавйев, Павловсем пулнă. Çак сăнсене колхозниксем хытă критикленĕ, вĕсен ситменлĕхĕсене кăтартса панă. „Чапайев“ колхозăн колхозниксем 90 сăнран пĕри те Волковшăн сасăламан. Çапах вăл Волковшăн сасăламан.

Горбунов хӳтĕлевĕпе списокăрах тăрса йăлнă. Райĕçтăвком президиумĕ ăна суйлав комиссси членĕ пулса ĕçлесси нчен кăларнă. Анчах халĕ те суйлав комиссĕсенче йăт етемсем, халăх тăшманĕсем сут, тесе калама хĕн. Ака Атнаш йăлсовет председателĕнче ĕçлекен Архип Сорокин—вăлах участкăри суйлав комиссси председателĕ, граждансен пухăвĕнче ӳсĕр пуçпа тухса контрреволюцилĕ сăмахсем каланă. Вăлах йăлсовет ĕçĕсене, дисциплинăна йăвашлатса йăнă. Çапах та халĕ те хăй вырăнĕнчех ĕçлет-ха.

Суйлав умĕнхи чи ответлă тапхăрсем килсе çитрĕç. Апла пулсан ĕçе татăклăнах вăйлатни, класс сисĕмлĕхне хăнăртни кирлĕ. Çак ыйтусене сӳтсе-явас тĕлĕшне ĕнтĕ нойабрĕн 9-мĕшĕнче Сител йăлĕнче участкăри суйлав комиссси председателĕсемпе заместительĕсен, секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Аслă Советă суйлас тĕлĕшне ĕçлекен округри суйлав комиссси членĕ Ашмарин йăлтăн доклад туса пачĕ, тата райĕçтăвком председателĕ Скворцов йăлтăн суйлавçăсен списокĕсене сырса хатĕрлесси çинчен тĕплĕн йăнлантарчĕ. Ыйтусем нумай пачĕç.

Халăхи вăхăтра йăлсовечĕсенче суйлавçăсен списокĕсене йĕркелесе çитерес ĕç хĕрӳлĕ пырать. Райкомпа райĕçтăвком йăлсовечĕсене пуçлăма, вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслеме сăнсем йăвăç. Нойабрĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа суйлавçăсен списокĕсем куранмала çĕрте çакăнса тăраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех суйлав иртекен çуртсене комнатăсем тата уйрăм оборудовани тăвасси те сăрлăчĕ. Ушанар суйлав участки ку тĕлĕшпе кăтартулă ĕçлет. Унта пулăмсене туса пĕтерĕç. Сител участкинче çак кунсенчех туса çитереççĕ. Халиччен ĕç фанер çуккине чăранса тăнă пулсан, халь пур йăлсовечĕсене те фанер илме нарйадсем панă.

В. Чернов.

Ленинград хулинчи Московский суйлав округĕнчи округ суйлав комиссĕн членĕ А. Н. Толстой—совет писательĕсен Сойузĕн Ленинград уйрăмĕнчен.

Р. Мазелев фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Йăлсовет канцеляриселе куçтурлă пулăвăр

Йăлсовет канцеляриселе куçтурлă тытасси çинчен райĕçтăвкомсенче те, йăлсоветсенче те сахал калаçман. Анчах чылай çĕрте калаçнисенчен нумайăх малалла каймасть-ха.

Анат Кипекçе (Çĕрпӳ р.) йăлсовет канцеляринĕ ĕлĕкхи курал пӳртне вырнаçнă. Çурчĕ кĕр-кĕр йăтăнса анас пек. Аппĕнче тĕттĕм, таса мар.

Çавăн пекех Ишлей районĕнчи Салапайкасри йăлсовечĕн канцеляри те. Йăлсовет канцелярине йăвăрах çурт ку йăлта урăх тупма та хĕн. Мунча пек пĕчĕк пӳрт. Чӳречисене ватса пĕтернĕ. Урайĕ йăланах çупăлĕ.

Йĕнчĕк районĕнчи Вăрăм Хăва йăлсовечĕн канцеляринĕ тара илнĕ çуртра. Канцеляринче час-часах пĕр хватертен тепĕр хватере куçаррăçĕç.

Мăн Сĕнтĕр йăлсовечĕн (Йĕтĕрне р.) канцелярине çĕнĕ çуртра. Анчах çурт йăшĕнче ним типтерлех сук. Ăçта-кирлĕ унта хут татăкисем сапаланса выртаççĕ. Шкапсем, сĕтел сунтăхĕсем питĕрĕнмеççĕ.

Тăвай районĕнчи Иванова йăлсовет канцелярийĕ унтан та йăпăхрах. Кунта, йăлсовет работникĕсен типтерсĕрлĕхне, ответсăрлăхне пула, сентăбĕр уйăхĕнче йăлсовет канцелярийĕнчен ача сураллăн çырмали кĕнекесене вăрласа кайнă. Йăлсоветăн хуçалăх кĕнекине те çĕтернĕ.

Райĕçтăвкомсемпе йăлсоветсем йăлсовет канцелярийĕсене лайăхлатма, куçтурлă тума тăрăшмаççĕ, ку ĕçе чысламаççĕ.

Таса, илемлĕ, куçтурлă канцеляринче ĕçлеме те лайăх, ĕçпе пыракан çынна та кăмăла каймалла. Çавна манма кирлĕ мар. Йăлсовет канцелярийĕ типтерсĕрринчен—чи малтан çав канцеляринче ĕçлекен çынсем хăйсем типтерсĕрринчен, тимĕрринчен килет.

Й. Муратов.

Тата лайăхрах вĕренме, тăрăшса ĕçлеме пулатпăр

ЙĔТĔРНЕ. Совет Сойузĕн правительстви агрономсен ĕçуçкине хăпартма йышăнни. Йĕтĕрнери йăлхуçалăх техникумĕнчи студентсемне преподавателсене тата агрономсене вĕсĕмсĕр хăваласпа ăнчĕ. Йăтарласа пуçтарăннă пухура нумай студентсемпе агрономсем сăмах тухса калăрĕç. Вĕсем пурте агрономсемшĕн тăрăшнăшăн хамăран тăвăн коммунистла партипе совет правительствине тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕхĕррисĕр тав тăваççĕ.—Агрономсен ĕçуçкине ӳстермелле туни пире отличнă вĕренме, тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать. Çĕршывра çулсерен 7—8 млйăрд пăт тĕштирĕ туса илесси çинчен Сталин йулташ паян лозунга пурнăçа кĕртессăшĕн, хамăрăн ытларăмми паха тăван çĕршыва тата ытларах пуйтарассишĕн пĕтĕм вăйăн тăрăшатпăр,—теççĕ студентсемпе агрономсем.

П. Здорнов.

„Пчелкино“ колхозăн паха ĕçĕсем

ТРАК. „Пчелкино“ колхоз Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçун строительствинче ĕçлессипе малти вырăна тухрĕ. Вăл 560 куб.ла метр çĕр чавса кушалас вырăнне пĕтĕмпе 6412 клубла метр çĕр чавса купаланă. Кун пек çĕр ĕçне нумай тунă колхозсĕм районра урăх çук.

Строительствăра лайăх ĕçленĕшĕн „Пчелкино“ колхоза 3000 тенкĕ укçа парса премилеренĕ. Премин укçине колхоз клуб тата радио лартать.

П. Александров.

Колхоз завод лартать

ЙĔПРЕÇ. Туçари „Хĕрлĕ металлист“ колхозра Аслă Советă çулламали кун тĕлне черепица тăвакан завод туса пĕтереççĕ. Заводăн çуртне тата шалти хăшпĕр ĕçĕсене туса çитернĕ тĕ ĕнтĕ. Халĕ кăмака тăваççĕ.

Ку заводра 50 рабочи ытла ĕçлемеле пулать.

К. Марушев.

Вăрнар МТСтанци мала тухрĕ

ВĂРНАР (хамăр корр.). МТСтанци 3—4 çул хушши хăйĕн ĕçĕпе республикăра иккĕмĕш вырăнта шутланса тăнă. Пĕрремĕш вырăнта Йĕпреç МТСтанцийĕ тăнă. Кăçал Вăрнарти МТС йĕпреçсене социализмăла ăмăртăва чĕнчĕ.

Догăвăрпа кашни СТЗ тракторпа 900 гектар, ЧТЗ тракторпа 200 гектар ĕçлеме обйазательствăçем илнĕ.

Илнĕ обйазательствăна МТСтанци пурнăçланă. Октябрĕ уйăвне МТС государствăпа панă плана 135 процент тултарса, республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнса кĕтсе илчĕ.

Йăланах малта пыракан трактор паркĕсенĕ хуса çитсе иртсе кайассине пурнăçа кĕртес майпа тракторисенне анчах мар, плугареене те МТС курссенче вĕрентсе кăларнă. Çакăн пек туни ĕç тухăçлăхне хăпартма пит нумай пулăшрĕ, мĕншĕн тесен трактористсем те, плугарсем те хăйсен ĕçне тĕплĕ пĕлнипе машинăсен вăйăпе пĕтĕмпех усă курнă.

Ку çеç те мар, МТС куçтурлăмассăлă ĕçе бригадăсенче производствăлă канашлусем ĕçеемпе çыхăнтарса туса пынă. Бригадăсенчи комсомолецсем, стахановецсем воспитани ĕçĕсĕр пуçне, йăланах ĕç тухăçлăхĕшĕн производствăлă камашлусем туса стена хаçачĕсем урлă кĕрешсе пыч̆ĕç.

Вунă кунра пĕре йăланах трактор бригадин бригадирĕсемпе производствăлă канашлусем туса вунă кун хушшинчи ĕç тухăçлăхĕсене шута илсе, йăмăртура кам малта пынине палăртнă. Çакăсем пурте йăмăртура мала тухма пулăшрĕç. Стахановецсен йышĕ те ӳснĕ. Вĕсем иртнĕ çулта 13 çын шутланнă пулсан, кăçал 30 çын ытла. Вĕсем кулленхи ĕç нормине 150—200 процент таран пурнăçласа ĕçленĕ.

Колцовкă участкинчи виççĕмĕш трактор бригади (бригадирĕ Мишаков) кашни СТЗ тракторпа вăтамран 1250 гектар ĕçлесе МТСтанцине пĕрремĕш вырăн йышăнма.

Нурăсри (бригадирĕ Костин), Ойкасри (бригадирĕ Кандратиев), Хурăн Сурти (хĕрарăм бригадирĕ Харитонова) трактор бригадисем вăтамран кашни тракторпа 900 гектар ытла ĕçленĕ. Трактористсемпе ĕçлекенсенчен уйрăмăнах А. Панфилов хăйĕн сменинче 700 гектар, Куйăкасри 650 гектар, Илларионова 500 гектар, Павлова 510 гектар, Радайева 450 гектар ĕçленĕ.

МТСтанци ĕçленĕ ĕçе колхозсенче начар хак пани пулман. Пысăк пахалăхпа ĕçлесе МТСтанци ĕçлесе паракан колхозсенче халиччен пулман тырпул туса илнĕ. Акă, Коцловкăри Сталин йăчĕпе тăракан колхозра ыраш вăтам шутпа кашни гектаргаан 24 центнер, сĕлĕ 38 центнер, тулă 26 центнер тухнă. Зеленовкăри Ленин йăчĕпе тăракан колхоз ыраш—25 центнер, сĕлĕ—22 центнер, тулă—15 центнер; Рунгăри „Малый Цивиль“ колхоз ыраш—19 центнер, сĕлĕ—22 центнер, тулă—19 центнер туса илнĕ. Кун пек колхозсен йышĕ темĕн чухлех.

Халăхи вăхăтра МТСтанци умĕнчи пысăк задач вăл—авăн çапса пĕтерессине трактор сене ремонтласа çитересси пулать. Анчах та машинăсене йусама хатĕр мар-ха. Тĕрлĕрен машинă пайĕсем çителĕксĕр, тата вĕсене нимта тупма та çук. Чăваш Сĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йĕнчен ку тĕлĕшпе татăклă ĕçсем туни çук. Тата тракторсемпе ытти машинăсем йусакан мастерскойа районри электростанци йуриĕех пĕчĕк пăралук карса çителĕксĕр çуга пани те ĕçпе питĕ чăрмантарать.

Е. Дзенбраун.

Стахановла ĕçлени мĕн пачĕ

Хĕрлĕ Çыр йăлĕнче (Вăрмар р.) колхоз организацинĕ ĕçленĕренне сакăр çул иртрĕ. Çав вăхăт хушшинче колхоз хуçалăх ĕçачĕн лайăхах çирĕплесе çитрĕ. Колхозра пурĕ 147 хуçалăх пĕрлешсе тăрать. Колхоз çултан çул пысăк çитĕнӳсем туса пычĕ, халĕ вăл районра чи малти вырăнта тăрать.

Агротехникăн çĕнĕ майĕсемпе ĕçлесе пырса кăçалхи çул иртнĕ çулхинчен 4910 центнер тырă ытлашши илнĕ. Вăтам шутпа гектартан ыраш 22-шер центнер, сĕлĕ 28-шер центнер, çурхи тулă 25-шер центнер, урпа 35-шер центнер пулнă.

Çакнашкал пысăк тухăçлă тырăшăн пур колхозниксем те пĕтĕм вăйа хурса кĕрешнĕ. Çак кĕрешĕве вĕсем çуракине хатĕрленме пуçласанах пуçарса йăнă. Çураки кампанине тĕплĕн хатĕрленсе, çуртприсене кĕске çрукра тата пысăк пахалăхпа акса пĕтернĕç. Çуртри акмали вырăна 3.000 лава йăхăн навус, 120 центнер ытла тĕрлĕ минерал çăнăхĕсем кăларчĕç. Пĕтĕм акмали вăрлăха трифорпа виçĕ хутчен çуртласа йăпоризацилеес акрĕç. Акна тырăсем çинчен сумкурăкĕсене ӳсме паман, вăхăтрах сумласа пынă.

Çапла ĕнтĕ, колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлени аханă сайа кайăмрĕ. Кашни ĕçкунĕшĕн 20-шер кĕренке тĕштирĕ тата укçан та чылай илеççĕ. Колхозник Хавайский хăйĕн семйинпе 1680 ĕçкунĕ туса 840 пăт тырă, 480 тенкĕ укçан илет. Чесноков Ф. семйи 705 пăт тырă илет. Колхозник Михайлов В. хай пĕччен ĕçлесе 271 пăт тĕп тырă илет. Вăтă колхозник Хавайский Христофор тĕрлĕ ĕçре ĕçлесе 400 ĕçкунĕ туна. Колхозра стахановецсем йышĕ ӳссех пырать. Хĕрарăмсем хушшинче палла стахановкăсем: Хавайскайа Федосийа хай пĕччен 345 ĕçкунĕ туна, Чесноква Анна—305 ĕçкунĕ.

Çак тĕслĕхсем колхозниксем чăннипех пуйăн та куçтурлă пурнăç çулĕ çине çирĕплĕн тăнине кăтартаççĕ. Çавăнпа та вĕсем колхоз пурнăçне ырласа, телейлĕ пурнăç туса панăшăн аслă Сталина тав тăваççĕ. Ĕлĕкхи вак хуçалăхпа пурăнна чухне халăхи телейлĕ тулли пурнăç, халăхи лек нумай тырă çинчен асăнма та пултарайман. Халь колхозра чухăн пурнăçпа пурăнакан пĕр колхозник те çук. Кашни колхозникăн килĕнче ĕне, сыснасем, сурăксем тата ытти пăхăсем пур.

А. Васильев.

250 процент тултарма пулатăп

Канашри вагонсем йуса кан заводра ĕнĕ 1935 çултанпа ĕлетĕп. Малтанах манăн ĕç ăнса пымастчĕ. Ĕнĕ станок ванасран хăраттăмчĕ. Ултă уйăх вĕренĕ хыççăн мĕне ĕçлемелине лайăх ăнланса илтĕм. Мастĕрсем хушшине ӳркенмесĕр туса пытăм. Вара манăн ĕç куран-кун лайăхланса пыма тытăнчĕ. Часах стахановкă пултăм.

Лайăх ĕçленĕшĕн мана виçĕ хутчен уçса парса премилерĕç, икĕ хутчен каннами сурăта йăнĕç. Куман тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Ĕнĕ сине тăрса тимлĕн ĕçлеме тытăнтăм. Производствăра тăрăшса ĕçленĕ вăхăтрах хамăн пĕлӳне ӳстересшĕн тăрăшрăм. Мана хула совет членне суйрам. Мана хула совет членне суйларĕç.

Ĕнĕ сталинла призывăн почотлă значокне илме тивĕçлĕ пултăм. Манăн кăмăл савăнăçпа тулчĕ. Сав савăнăçпа ĕнĕ пире хĕрарăмсене пусмăрлăхран хăтарса телейлĕ çул сине кăларакан Сталин йулташа чĕререннăн тăватăп.

Пирĕн елĕк имĕнĕне права та пулман. Пире йăлти пухусене те кӳртмен. Халĕ епĕр пур ĕçре те арçынсемпе пĕртан. Çивĕч сехет производствăра ĕçленĕ хыççăн пире лайăх канăç кĕтсе тăрать. Манăн уйрăм пӳлĕм, вĕренме никам та чăрмантармасăт. Пӳлĕмре радио пур

Аслă Совета суйламали кун сыхăрса килет. Ку кун маншăн савăнăçлă уйăх. Манăн кăмăл çав уйăха ĕçре, вĕренӳре тата пурнăçра ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илес хавасланăпа тулчĕ. Халĕ епĕ нормăна 180 процент тултаратăп пулсан, 250 процент тултарма пулатăп.

Й. Антонова.

Алăстаçсен çемйи

Надежда Маркова Шупашкартри Ленин йăчĕпе тăракан çĕвĕ çĕленкен ертел членĕнче 1929 çултанпа тăрать. 1932 çулччен вăл çĕвĕ çĕленĕ çĕрте ĕçленĕ. Халĕ вăл бригадир, хăйĕн йулташĕсĕнче ĕçлеме вĕрентет. Лайăх ĕçлет, тулăх пур нăçпа пурăнать. Маркова йулташ. Нормăна йăланах 2 процент тултарса пырса кашни уйăхра 270 тенкĕ ĕçлесе илет. Унăн упăшки, Николай Иванович тепĕр ертелте стольăр пулса ĕçлет. Вăл 300 тенкĕпе кĕрен кайа илмест. Ывăлĕ, Ловă, Шупашкартри пĕрремĕш номерлĕ шкулта тăваттăмĕш класра вĕренет.

Маркова йулташ çине тăрсах кĕнеке-хаçатсем вулать, общественăлă ĕçсенче активлă хутшăнса ĕçлет. 1935 çултанпа ĕнтĕ вăл ертел правлени членĕ пулса ĕçлет.

Епĕ,—тет Маркова йулташ—Шупашкар хулинче чухăн рабочи семйинче ӳсрĕм. Атте, Андрей Степанович баржă хуçисем патĕнче тарçăра ĕçлеччĕ. Ихăсран тă вăл семйене тăрантармалăх ухса илее курман. Çавна пулах епĕ вĕренсе йулăпмарăм. Шкулта виçĕ çул вĕреннĕ хыççăнах çын патне тарçана кайма тиврĕ. Кунне 14—16 сехет ĕçлеттĕмĕ. Анчах çийĕ лайăх тумтир тăхăнса, тутлă апат çиме курман.

Совет влăçĕ хĕрарăмсене ĕмĕр-ки пусмăртан кăларчĕ. Хĕрарăмсем хăйне тивĕç правасене илчĕç. Çав правасемпе усă курса Маркова йулташ та тулли пурнăçпа пурăнма тытăнчĕ.

Ака часах Маркова йулташ Аслă Совета суйлама тухаг. Вĕсем халĕ упăшкипе иккĕшĕ те суйлав кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илеессишĕн тăрăшаççĕ.

В. Чернов.

Уйава çĕнĕ клубра иртерчĕç

ТРАК Шăпкин йăлĕнчи „Чăваш Коммунĕ“ колхоз Аслă Октябрĕ уйăвĕ тĕлне çĕнĕ клуб туса иртрĕ. Колхозниксем уйава хăйсен аслă та илемлĕ клубĕнче иртерчĕç.

Клуба илемлетрĕç, радио кӳртнĕ. Стенасем çумне çуллуçсем сăнĕсене çыпăçтарăç.

М. Павлов.

Пахча-çимĕç нумай пулчĕ

ЙĔЛЧĔК. „Путь Ленина“ колхоз кăçал пысăк тупăшлă пахча-çимĕç туса илчĕ. Иртнĕ çулта колхоз 61 сухăн Христофор Власов колхозникне йăтарласа районти колхоз шкулне йăрса вĕрентрĕ.

Х. Власов пахча-çимĕç лартса ӳстерме йăратать. Вăл вĕренсе тухсан чи малтанах шкул пахчине хăмăр çырли йăвăçисемпе улмуççисем лартрачĕ. Вĕсем питĕ лайăх чĕрĕлеççĕ.

Колхоз сĕрĕ çинче кăçал 7 тонна хăйăр, 15 тонна купăста, 12 тонна выльăхчĕрлĕх кăшманĕ туса илтĕмĕр.

И. Скобелев.

Алăсталăх выставкине хатĕрленеççĕ

КАНАШ. „Авангард“ промертел алăсталăх ертĕлĕсен республикăри выставкине хатĕрленме тытăнчĕ. Халăхи вăхăтра сĕнĕ сĕлекен цех тĕртсе тунă чăваш кĕписене сĕлет. Кĕпесене пурне те тĕрĕлеççĕ. Çавăн пекех ата-пушмак тăвакан цех та выставкăна тăратма атăсемпе ботинкăсем хатĕрлет.

А. Медведев.

Стахановецсене премилерĕç

ЙĔТĔРНЕ. Кăташтри „Пионер“ колхозра, Октябрĕрти Социализмăлма Аслă революцин 20 çул тултарнине уйăвланă май, 45 колхозник-стахановца премилесе панăçĕ. Премилисенчен пĕри—Ирина Ивановна; вăл колхозăн сет-сӳ ферминче тăвать çул хушши ĕçлет, стахановкă. Вăл пăхакан ĕнесем таса та мăнтăр. Кăçал вăл пĕччен 400 ĕçкунĕ туна. Колхоз Ивановна йулташа пăру парса премилерĕç.

Ник. Цветков.

Патрекел 20 çул хушшинче

ЙĔЛЧĔК. 30—40 çул кайалахи асаплă нумăлă пурнăçа вăтă çынсем аван астăваççĕ. Унччухне пирĕн Патрекелĕнче хреченсем, çĕр салхалипе, 10—12 километр айккара ларакан Кĕçĕн Тайăна йăл çĕрне тытса илсе, çав çĕршĕн тавлаша сахал мар пăшалсемпе, сенĕкемпе çанăçса пурăннă. Йăлта халăхи пек çуртсем мар, йăлтах улăм витĕм, чалăш-тĕлĕш пӳртсем,чылайăшĕн хура пӳртсем мăкăрланса ларнă. Крассăн вырăнне йăвăçран чĕлсе тунă хăйăр çутнă. Чылайăшĕ мунчала çутса пурăннă. Хутла пĕлекенсем йăлĕпе те 5—6 çын анчах пулнă. Йăлти чухăн хреченсен инăçăн та çиме çитмен, çипуçа тăхăнмалăх ырă тумтир тăваймăн, нумай чухăн хреченсем çамрăкласт бурлака тухса кайса, йĕр пĕр-пĕр кулак патне, пуп патне тарçа иĕрсе, вилес пек ырми-канми ĕçлесе пурăннă. Тата хăшпĕр хреченсем хăйсен çĕрĕсене ирĕксĕрех кулакесене çурмала амăа парса пурăннă. Нумай хĕрарăмлă хреченсен пĕр-икĕ йăт çĕрĕне семйери 6—7 çынна тăрантарса усрама тивнĕ. Акă, Сергей Абрамов семйинче 7 çынран пĕрне анчах çĕр панă, хĕрарăмсем, çын шутĕнче шутланманскерсем, çĕрсĕрех пурăннă. Çапла пулнă ĕнтĕ патша вăхăтĕнчи тискер, усал хăрушă дурнăç.

Çак çулсем хушшинче Патрекел йăлĕн сăн-сăпаче тĕпренех улшăнчĕ. 1928 çулта 7 хуçалăхран колхоз организацинĕ. Халĕ вăл колхозра 202 хуçалăх тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесе пуйăн та куçтурăлă, хавасла пурнăç çулĕ çине тухрĕç. Халь государствăпа акти тăрăх колхоза 760,50 гектар ĕмĕрлĕхе усă курма çĕр касса панă. Çĕр ĕçне ĕлĕкхи пек сухапуçне тумастăр, трактор-семпе, комбайнсемпе, агротехникăпа кăтартăнă пек ĕçлесе тырпул тухăçлăхне çулран-çулах ӳстерсе пыраттăр.

Ахалтен мар ĕнтĕ ĕлĕк гектартан арăн-арăн 50—60 пăт тырă тухса илнĕ çĕр çинче, халь гектартан 100—120 пăт тĕштирĕ туса илет-пĕр. Кăçал гектартан 18 центнер ыраш, 19—20 центнер тулă, 20 центнер сĕлĕ, 14 центнер пăрçа-йăсмак туса илнĕ. Колхозниксем чылайăшĕ кăçал тĕштирĕ кăна 300—350 пăтшăр илеççĕ, выльăх чĕкĕнтĕрĕ 120 пăт, çĕрулми 150—170 пăтшар илеççĕ.

Ака илер Егор Карикина. Унăн аллинчен нихăçан та кĕтӳ чăпăркки кайман. Вăл ĕлĕк çĕрĕн-кунĕн вилес пек канмасăр ĕçлесен те çăкăртăвар çиме çитмен, тăхăнмалăх тумтир тăваймăн, выльăх-чĕрлĕх усраса курман. Халĕ Карикин колхозра чи палла стахановец, вăхăтлăха колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Халĕ унăн çиме те çитет, тăхăнмалăх тумтир те пур, ĕне те тата ытти выльăх-чĕрлĕх те усрать. Кăçал вăл 13 сухăн ачипе 568 ĕçкунĕ ытла туса тĕштирĕ кăна 210 пăт, выльăх чĕкĕнтĕрĕ, çĕрулми, кишĕр 185 пăт илет.

Çавăн пекех ĕлĕкхи вăхăтра нуша курса пурăннă Николай Орлов халĕ сахалтан та 250—300 пăт тĕштирĕ илет.

Йăлта текех хура пӳртсем çук ĕнтĕ, вĕсем пĕтнĕ. Нумай колхозниксем тĕрлĕрен хаçат-журналсем çырăнса илеççĕ, килĕсене радио кĕртеççĕ. Халĕ колхозăн хăйĕн клубĕ, кĕнеке-журналсем çитĕнӳ, кăмăлпа ĕçлеме çирĕплесе çитерессишĕн тăрăшрăм. Мана хула совет членне суйларĕç. Мана хула совет членне суйларĕç.

Комсомолецсем пуçарнипе йăлти халăха „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕрентеççĕ.

Йăлта тулăмар вăтам шкул пур, унта 1—4-мĕш классенче 140 ача, 5—7 классенче 97 ача вĕренеççĕ. Кусемсĕр пуçне тĕрлĕрен вăтам, аслă шкулсенче 17 çын вĕренеççĕ. Йăлта тăхăпунăн ĕçлет. Ĕлĕкхи вăхăтра 75—80 процент ытла хутла пĕлменнисем пулнă çынсем, халĕ хутла пĕлменнисем 1—2 процент анчах тăрса йăлнă. 34 колхозник хăйсен килĕсенче радио итлеет.

Патрекел йăлĕнчен 2 инженер, 1 доцент, 26 учитель, 2 тухтăр, 1 фельдшĕр, 2 лейтенант, 10 трактор-ист, 2 механик, пĕр шофĕр тата 10—11 çын ытла тĕрлĕрен совет учрежденийĕсенче ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех колхозăн пурăнăçне те çуланăн-çулах ӳссе çирĕпленсе пырать. Йăлхуçалăх машинисем—ынженĕрсем, молотилкă, сейалкă, плугсем, т. ыт. складра тулли-ех лараççĕ. Колхозăн кирпĕч çапакан завод пур, фермăра 103 пуç сурăх, 15 пуç аратла така, 25 пуç сысна. Кăçал çĕнĕрен сурăх вити туса пĕтерчĕç.

Гер Иванов.

Суйлав участкисен центрёссенче суту-илу организацилесси çинчен

Чăваш АСС Республикён Халăх Комиссарёсен Совечё йышăннă постановлени

Суту-илу ёсне суйлавёсем тытнерех сыхăртас тата куллен кирлё таварсем халăх ыйтнине пётёмлетпе тупса парас тесе, Чăваш АСС Республикён Халăх Комиссарёсен Совечё сапла йышăнать:

1. Нойабёрён 20-мёшёнчен кайа йуламасăр мён пур суйлав участкисен центрёссенче куллен кирлё таварсем сутма магазинсемне ларйоксем организацилемелле.

Суйлав участкин центрёнчи магазинра ёс ларйокра сутлăх тавар-сем, ви сăхал пулсан та, çаксем пёр тăтăксăр пулмала: хура тата шура çăкăр, булкăсем, сушкăсем, чёй тата сахăр, конфетсем, печенисем, премёксем, йăвăçлимсем, маковăçа пируссем, спичкăсем, тăвар, кёпе, супнё, парфюмери таварёсем.

2. Вăхăтран вăхăта район центрёссенчен суйлав участкисене йăтараласа тунă куçса çурекен киоскасем йăрса, суйлав участкисен центрёссенче кёнекесем, плакатсем, партине правительствă çулпуçёсен портречёсем, çавăн пекех тата концерчăсем хатрёсемне ыттн куçтурă тăварёсем нумайрах сутас ёçе организацилемелле. Кашни районтах куçтурă тăварёсем сутакан куçса çурекен 3—4 киоск пулмала.

3. Суйлавçёсемне куçтурă ёненпе ёçлеме уйăрнă кашни çуртрах буфет организацилемелле тата куçтура тăварёсемпе суту илу тумала.

Чи сахал пулсан та, буфетра çаксене сутмала: хура тата шурă çăкăр, булкăсем, сушкăсем, чёй, сахăр тата конфетсем, печени, премёксем, махорка, пируссем, йăвăçлми, ситро, кăвас, кăлпасси, пулă, консервăсем.

Куçтурă тăварёсенчен çаксем обязательно пулмала: суйлав çинчен калакан литературă тата плакатсем, партине правительствă çулпуçёсен портречёсем, общественнă-политикăлă ыйтусем тăрăх кенекесем тата канцеляри тăварёсем.

Вăл суртсенче халăх пур чухне буфетсенче йăланах суту-илу тумала, суйлав кунёнче—декабёрён 12-мёшёнче—ирхине 6 сехетрен пуçласа çёрле 12 сехетчен сутуилу тумала.

4. Кашни суйлав участки центрёнче суту-илу организацилесшён ответлăх йăлосовет председательё ёçне çине, районтă—райёстăвком председательё çине хурас.

5. Чăвашсойуз, Чăвашторг, Вăрманпродторг, Когиз уйрăмён руководительёсене районсене практикăлă пулăшу пама халех ответлă представительсем палăрса йама хушас.

Республикăри суту-илу организацисен руководительёсене, республикăра суйлав участкисен центрёсенче суту-илу организацилесшён пётём ответлăх йăлосовет председательё çине ӳкет, тесе асăхтартасар.

Çак кирлё ёçе пётёмёшне йёртсе пыма Шалти суту-илу халăх комиссариатне хушас.

Чăваш АСС Республикён Халăх Комиссарёсен Совечён председательё **Л. Спасов.**

Чăваш АСС Республикён Халăх Комиссарёсен Совечён ёçёсене пăхаканё **Н. Жуков.**

1937 çулти октябрён 31-мёш.

Октябрьти Социализмла Аслă революцин çирём çул тултарнине Китайра паллă туни

ШАНХАЙ, 9-ХІ (ТАСС). Нойабёрён 7-мёшёнче, Шанхайра тухса тăракан пур хаçатсем те пекех Октябрьти Социализмла Аслă революцин çирём çул тултарнине çинчен статйăсем тата материалсем пичетлесе кăларнă. Статйăсем нумайёшне Китай халăхне Китай çине килес ӳкёт хăрушлăха хирёç кёрешёпе ССР Союзёнчи халăхсен примерё тăрăх пыма чёнинне вёçлеççё. Пур статйăсенче те ССР Союзё аслă çёнтёрёсем тунăшăн хёпёртесе тата ССР Союзёнчи халăхсене Китай хушшинче çирёл те туслă хутшăнусем пулас шанчăка палăртса сырнă.

Сун Дзин-лин (Китайри аслă революционерăн Сун Ят-сенăн тăлăха йăлăнарăмё) „Ченьчжоужибао" хаçатра пичетленё статйинче çапла сырать: „ССР Союзё малала кайни тата унта пурăнăç ырăлашни историлё факт пулса тăчё. Кăна йăлнă тата експлоатацленнё çёршывăн тёнчери чи пысăк держава ӳсе çитёнчё. ССР Союзёнчи халăхсем, работчисемпе хресченсем, хăйсен куçусён хуçисем пулса тăчё. ССР Союзё, йăвăр испытанисем витёр тухса, мир, прогресс тата ирёклёх çулё çине тухрё. Социалла тата экономикăлă кризиссене пăмăн тёнче туса хунă. ССР Союзёнчи халăхсем çакăн пекён тёнче тата вăйлă халăхсем социалла ырлăхёшён, хума вёренчёк, природăна çёнтёрме, ăна хăйсене мён кирлине тутарма вёренчёç. Пирён хамăн пек аслă кӳрше примерё тăрăх пыма-ла".

Бразилире фашисла влаç туса хунă

Америкă пичечё пёлтернё тăрăх, Бразилире (Кăнтăр Америкăри государствă) фашисла влаç туса хунă.

Бразили президенчё Варгас ӳçă фашисла дуктатурăпа режимне йёркелекен çёнё конституци кăларнă. Пётём çулăнта органсене салатса йанă.

Октябёр уйăхёнчех Бразилире вăрçăлă йёрке кёртнё, фашисăма хирёççисене çёнёрен тунă концентрацилё лагерсене пинё-пинёне хупнă.

Нумай штатсем (облăççем) Варгас йёркеленё диктатурăпа килёшмен. Вăл штатсене çарсем йанă.

Йутёршывсенчи пичет Бразилире фашисла влаç туса хуни çинчен сырса, Бразилире—халё тёнчене çёнёрен империализмла йёрке кёрёççисене кёрёшше вăрçăлă-политикăлă сойуспа сыхăнна Германи, Италипа Японни хытă ёçленине паллă тăват.

Бразилире 400 пин немец, 500 пин японец, 500 пин ытла итальянец пурăнать.

Бразили пынăçён чи паллă отрăçёлёсенне пуç пулса тăрассине вăçуллми, ситро, кăвас, кăлпасси, пулă, консервăсем.

Куçтурă тăварёсенчен çаксем обязательно пулмала: суйлав çинчен калакан литературă тата плакатсем, партине правительствă çулпуçёсен портречёсем, общественнă-политикăлă ыйтусем тăрăх кенекесем тата канцеляри тăварёсем.

Вăл суртсенче халăх пур чухне буфетсенче йăланах суту-илу тумала, суйлав кунёнче—декабёрён 12-мёшёнче—ирхине 6 сехетрен пуçласа çёрле 12 сехетчен сутуилу тумала.

4. Кашни суйлав участки центрёнче суту-илу организацилесшён ответлăх йăлосовет председательё çине, районтă—райёстăвком председательё çине хурас.

5. Чăвашсойуз, Чăвашторг, Вăрманпродторг, Когиз уйрăмён руководительёсене, республикăра суйлав участкисен центрёсенче суту-илу организацилесшён пётём ответлăх йăлосовет председательё çине ӳкет, тесе асăхтартасар.

Çак кирлё ёçе пётёмёшне йёртсе пыма Шалти суту-илу халăх комиссариатне хушас.

Чăваш АСС Республикён Халăх Комиссарёсен Совечён председательё **Л. Спасов.**

Чăваш АСС Республикён Халăх Комиссарёсен Совечён ёçёсене пăхаканё **Н. Жуков.**

1937 çулти октябрён 31-мёш.

Шупашкар хулине—вут-шанкă

Шупашкар хулинчи вут-шанкă хатёрлесе паракан организацин (Гортоп) вăрманёнче Шупашкар, Ишлей, Йётёрне, Тутаркас районёсенче ёçлеççё. Кăçал ёçлеме пыракансене кётсе илес майпа Гортоп вăрманта 600 çын пуранмалăх 13 хёллехи бараксем туса лартнă. Халё унта 300 çын ёçлеме тытăннă.

Вăрманта ёçлекенсем ёç хыççăн хи пушă вăхăта куçтурлă иртерме пултараççё. Вăрманта йăтарласа 2 хёрлё кётес организацилемёç. Вёсенче биллиард, шашка-шахмăт, хуткупăс, балалайка пур. Хаçат-журналсем йăлăнах пырса тăраççё, библиотекăсем ёçлеççё.

Пайăнхи куна 82.772 кубла метр вутă хатёрленё. Вăл шутран 51.940 кубла метрне уйла халăхё вăлăпи турттарса килёсене çитерес панă.

Тёрёсленё заметкăсем

„Ирсёр хулиган"

А. йăлкор сырса пёлтернё тăрăх, А. Тиньаков Елёкри милици тытăмёнче ёçлесе пурăннă чухне апланнă. Кăшт пурăнсанах вăл арăмне çын çунне хушса вăрçма тытăнать. Кулак ывăлё пулинне пёлсен, милици тытăмё ăна ёçрен кăларать. Кун хыççăн, ёçсёр тăрçа йăлăнакер, арăмне тата ытларах вăрçнă, хирёçне, арăмне пăшалпа пёрсе амантнă. Сенташёрён 12-мёшёнче арăмён йăпаласене çёçене чикçе шăтăрса пётерет, йăлăшшинчен арăмне хватертен хуса кăларать.

Ку заметкăна Елёк районёнчи милици тытăмёнчен вырăна тухса тёрёленё. Заметкăра сырнă фактсем тёрёс пулнă. А. Тиньакова суда панă.

„Йёлчёк райёстăвкомне тăшмансем кёрсе ларнă"

Октябрён 3-мёшёнче тухнă „Чăваш Коммунё" хаçатра А. Воробйов, Маков, Кнаçев тата К. Воробйов йăлăшсем Йёлчёк райёстăвкомне хёсёнче кёнё халăх тăшманёсем сăтăрса ёçсем туса пыни çинчен сырăнчёç.

Заметкăра Сутёç пайён ёçёсем çинчен сырнă фактсене тёрёленё. Вăл заметкăна райёстăвкомён президиумёнче сутёçйăвнă.

Сутёç пайён пуçлăхё пулса ёçленё вăхăтра Пушков шкулсенче ёçлеме халăх тăшманёсене йăнă. Унта вёсене сăтăрлă, тăшманла ёçсем тума пулăшса пынă. Сутёç пайён инструктёрёнче ёçлекен Сергёвёпа Марков тăшманла элементсеме варлăнса пётнё, вёсемпе сыхăну тытнă. Шкулсенче халăх тăшманёсем Карсаков, Димитриёв, Осипов, Доброхатов, Зайцев ёçленё. Халё Пушкова райёстăвком членёнчен кăларнă. Байдерйакри шкулён ёçне-тёрёлене Сутёç пайён пуçлăхне Волкова хушнă. Сергеёвна, Маркова, Карсакова, Зайцева тата Димитриёва ёçрен кăларнă.

Çамрăк художниксен выставки

Октябёр революцийё мён пур пусмăрта пурăннă вак халăхсене, ирёке кăларнă хыççăн, пирён аслă çёршывăн пур кётёссисенче те искусствă чечекленесе, аталанса, ӳснё çемён ӳсе пырать. Çамрăк талантсем хăйсене валăри пур ёненчен те аслă çул тупма пултараççё.

Çакăн çинчен аван каласа парать те ёнтё Октябрьти Социализмла Аслă революцин 20 çул тултарнă йăтпа организацилене çамрăк художниксен выставки.

Улăтăр шкулёнче ӳссе пыракан çамрăк талантсене курма пулать. Выставкăра вунă-сын ытла живопиç тăратнă. Акă III-мёш класра вёренекен А. Саперован етӳёсем. Унпа йунашарах Самарин етӳёсем. Икё художникё пирки те пёр шухăнах калас килет—тăрăшса ёçлеççё, краскăсемпе ӳкё курма пёлеççё. Иккёмёш те пысак шанчăк парааççё.

Пысăк мăстăр-художниксен картинисене пăхса тёпченё чух часах çăкна илтме пултаратăн: „Кунта тулли сывлăш палăрса тăрать—пространствă"... Çак выставкăри картинăсене пăхнă чух та художникрен çапла илтме лекрё. Савнах калама пулать Канов художникён живописне тишкерсен те. Пысăк тавраллăх йăрса илеççё етӳçсем. Шывра, инçетре пёр каçăн курăнса килет. Пит илемлё картина. Илемлё пике портречё те художник хăй ёçён мăстăрлăхне алла савăрса илнине ӳçăнах кăтартать.

Çакăн пек пике хёрне Куделкин художник та çырнă. Малтанлаха икё картинине уйăрма хён-пек, анчах иккёмёшён живописе шёвёрех тухни уйăрса тăрать. Çапах та ку художникрен малашне пысăк ёçсем кётме тивёçлё.

Волков çырнă портретсем, уйрăмăнах старик портречё, питё аван. Çавăн пекех Луминарскине Просвиркинăн картинисем те камăла кайăççё.

Лувовăн ӳкерăмăн портречёçе „Вăрмăн" етӳне пăхсăн выраçсен палăрă художникё Рăйжски живописпе аса килет. Çапла каласа епёр Лувов ӳссе çитнё художник теешён мар, йăлтах урăхла, çамрăк художникён малашне мён пур вăйа ӳкерса хăйён мăстăрлăхне çёклеме тивёç, тетпёр.

Улăтăр шкулёнчи интереслă нумай картинăсенчен темиçе картинине Ййа Ворнова çырать. Вăл çырнă картинăсенчен уйрăмах „Колхоз базарё" тата „Испани халăхён çёлёкне тăхăннă пионер" вăйлă тухнă.

Сӳлте асăннă çамрăк художниксен алли витёр краскăна пир кăна мар пиçсе тухать. Вёсен мăстăрлăхё тата сарлака. Гравюрă ёçне те тимлесе вёренеççё вёсем. Кăçалхи выставкăра вёренекенсен гравюри пысăк утăмсем туни палăрмалах курăнать. Йăтарласа гравюрă альбомёсем хатёрленё. Гравюрă витрини, пёчёкрё пулин те, аван произведенисене кăтартать. Асăннă художниксен ёçёсемсёр пуçне унта тата Овчинниковăн ёçёсем пулать. Коротковăн „Конституци проёкчё-не сутсе-йăвни" килёшмеле тухна.

Художник-самоучкăсенчен И. Филиппов ӳкернё картинăсем йёркелерех тухнă теме пулать. Филиппов фотографирен пăхса ӳкерме вёреннё пулсан, ăна йăпаласене пăхса ӳкерме сёнес килет.

Мăстăрлăхё сахал пулни те, Меркурйёвпа Арӳхин йулташсен картинисене мухтама тивёç. Пуранăçра пулса иртекен паллă историсене вёсем палăртма тăрăшаççё.

Выставкăра картинăссемне портретсем йышлах мар, анчах пахалăх телёшёнчех илсен, çамрăк художниксем ӳссех пынине куратпăр. Уйрăмăнах Кановпа Куделкин йулташсен пултарулăхё малала çирёплён аталанса пырать.

Йулашкинчен, Шупашкарти Госбанк сотрудникё Петров йулташăн скульптури çинчен. Ик-виç скульптураран хăйён сăнне вăл аван кăларнă. Çакăн йышши самоучкăскульптăрсемне Чăваш совет художникёсем собуçён тачă сыхăнас пулать, çыхăнмаса ёçлеç мар, вёсене пулăшу парас пулать.

Мих. Ижейев.

Темтепёр

Вăрман касакан танк

Канадăра вăрман касма йăтарласа хатёрленё трактор-танксеме усă кураçси анлăн сарăлнă. Трактор умне виç кётеслё икё хурçă лезви вырнаçтарнă. Лезвисене çавăрăнса тăракăн шарниресем çине çирёплетнё, ёçлесе вёсем хачă йенёрлё ёçлеççё. Йăваçа кассан танк ăна тёртсе хăйён умне ӳкерет.

Çакнашкал хачăсемне 60 сантиметр диаметрлă йăваçа танк темиçе секунд хушшинчех касса татать.

Специальнăй ёçсем хаклана тăрăх вăрман касакан пёр танк, йăлăх вăрман касма пёлекен икçёр çын чухлё касса ёлкёрет.

(„Наука и жизнь").

* * *

Пулас çанталăка пёлтерекен автомат

Стокгольмра çитес куненче çанталăк мёнле пулассине телефонпах пёлесе тăраççё. Телефон трубкине çёклеççё те номёр хаклаççё, хирёç сын сасси калаçакан пёлес тенё куй мёнле çанталăк пулассине каласа парать.

„Барометр-автомат" Стокгольмра пуçласа пирвайхи 1936 çулхи июнь уйăхёнче тунă. Сулла унпа хулара пурăнакайсем куллен 1500 сын ытла ӳсё кураççё; ухатана, пулă тытма кайма мёнле çанталăк пулассине ыйтса пёлеççё т. ыт. те.

(„Наука и жизнь").

* * *

Самолёт çинче чёрё пулă

Нойабёрён 5-мёшёнче Саратовран Ленинграда Атăлта тытнă пулăсене чёрёллех тийёнё самолёт пынă. Ку вăл пулăсене чёрёллех самолётпа Ленинграда илес пырас малтанхи опыт пуллă.

Малашне Атăлта тытнă пулăсене чёрёлле çав куннех Ленинграда лессе тăма пуслаççё.

(„Ленинградская правда").

* * *

Тинёс чирёнчен хăтаракан çăтар

Данире океансенчи пассажирсем валли тинёс чирёне кёрешес ёçе çăмăллатмали çăтар шутласа кăларнă. Çăтара халтака резинăран туса металлран тунă рамкăсем сумне пружинăпа сакса хурассё.

Çапла тунă çăтар çывăрса пыракан пăссакирсене пуçа силлемёçёр тытса пыма май парать, пётём кёлетки караппа пёрле силленсе пырать.

Тинёс чирёне кёрешесси кунта çакăн пек пуласа иртет: пуçа тёк тытса пыни çын халăхи вăтаçёрёнчи шёвёкё кускаласа пыраран хăтарать. Вăл шёвек пёр мăй кускаласа пыни çынăн нервисен сисёмне сухатать, унпа пёрлех тинёс чирён пуп йёнёçсем те сивёлленеççё. Резинă çăтар çаксенчен хăтарма май парать.

Халăхи вăхăтра Данире çын пек çăтарсемне самолётсем çинче те усă кураççё.

(„Горьковский рабочий").

Чăваш АСС Республикён прокуратурине

Чăваш АССР Çёрёç халăх комиссариачён Ветеринари управленин начальникё пулса ёçленё Александр Тимофейевич Михопаркина Уголовлă Кодексăн 58—7-мёшпе 58—11-мёш статйисем тăрăх айăпламали ёçе тата ветеринари врачё пулса ёçленё Константин Иванович Орлова Уголовлă Кодексăн 58—7-мёшпе 58—11-мёш статйисем тăрăх айăпламали ёçе тата Михаил Иванович Семйагина Уголовлă Кодексăн 58—7-ёш, 58—11-мёш тата 58—10-мёш статйисем. І мёш пайёпе айăпламали ёçе Чăваш АССР Прокуратури тёрёслесё пётернё. Çак тăшманла контрревольуцилё ушкăн, выльăх-чёрлёх ёрчетес ёçе ăркатас шутпа, выльăха йёркен чирсене йурийех сарса пурăнна, çапла тунипе вёсем колхозсенче, колхозниксемпе йединоличниксен хуçалăхёсенче лашасене, майракалă шултăра выльăхсене вёт выльăхсене массăлăн вёлернё.

Час йёркен хăрушă чирсене çынсем çине куçарас шутпа çимёç продуктисене ветеринарине санитари йёнчен пăхса тёрёслесе тăрас ёçе йуриех аркатса йанă, çапла вара çынсене çимёç продуктисемпе масăлăн чирлеттерсе вёлермели условисем тунă.

Михопаркина, Орлова тата Семйагина айăпламали ёçе Чăваш АССР Аслă Суччён Специальнăй Коллекийё сывăх кунсенчех пăхса тухать. Судра айăпланаканна защитникисем те пуласçё. Суд хăй кун пулассине уйрăмăн пёлтереççё.

Суд хроники

Турхан районёнчи Сталин йăнёне тăракан промколхоз председателё Сергей Капитонов йăлăхуçăлăх ертелён уставне пăхăнса ёçлемен, кирлё ыйтусене колхозниксемпе сутсе-йавман. Хăй тёллён пус пулса ёçлесе, колхоза йуриех йăхăнтарма тăрăшнă. Çавăнпа та вăл ёнесёр колхозниксем вăлăн государствă банкёнчен илнё 900 тенкё уксана урăх çёре салатнă. Хăй çав вăхăтрах тавăрăлă сёт-çу ферминчен 1000 тенкё тăракан ёнене килне илес ёçе кайса 3 çул хушши суса пурăнна.

Работниксене хăй ирёкёне илнё, кăларса йанă. Ёсуççине хăй пёлнё пек парса пынă.

Колхозăнне 100 лава Рахăн улăм, 800 йилограм сёлё сутнă. 10 гектар çаран утине хăйне сывăх çынсемпе, никама систермесёр, валеçсе сулнă. Çавăн пирки колхозăн 1937 çулта хёлле 8 лаша, 4 ёне, 4 пус çамрăк выльăхсем выçăна вилсе вырттă.

Уйран тырпул пухса кёме 6 кун кайа хăварса кăларнă. Тыра тăкăнё. Кунёр пуçне тата 2 гектар сёр лаптăкё çине, йуриех машкăласа „английский мох" акнă тесе, акмасăр хăварттарнă. 4 пин штук йётён çурăмне сёртсе йанă. Арман мельничёне сыхăну тытса 442 килограм кёреçе тыртине вăртăран сутнă.

Капитонов, колхозниксене колхоз пурнăçёнчен сивётес шухăшпа, пёр çулта 86 колхозника нимён сăлтавсăр штрафласа ӳкса илнё.

Çакăн пек сăтăрлă ёçсене пурнăçа кёртсе пыма Капитонова Кирилл Голованинский тата Николай Головинский пуласа пынă.

Турхан районёнчи халăх судё Сергей Капитонова 6 çул хушши, ытти сене суталăк çурă хушши тёрмене хупса лартмала турё.

Колхозниксем суд приговорне ырласçё.

М. Полетайев.

* * *

Кăкшăм йынёчне пурăнакан Н. В. Шахмейев, 1920 çулта çуралнăскер, йаланах хулиганла ёçсем туса çӳренё. Колхоз счетоводён Николай Тувалев унăн ирсёр ёçёсене тăрă шыв çине кăларса нынă, колхозри стена хаçачё çине сырнă.

Н. Шахмейев çакăншăн Николай Тувалев çине тăрăхса пурăнна.

Майăн 9-мёшёнче Шахмейев ёçсе ӳсёрёнё те, Николай Тувалева урамра тёл пулса çёçёне чиксе вёлернё.

Йётёрне районёнчи халăх судё çак ёçе пăхса тухса, Н. В. Шахмейева 6 çула ӳпса лартмала турё.

М. Йемелйанăв.

ССР Союзён Аслă Советне суйлас тёлёшпе ёçленекен Шупашкар хулинчи 6-мёш участкăри Суйлав Комиссийё

ПЁЛТЕРНИ

ССР Союзён Аслă Советне суйлас тёлёшпе ёçленекен Шупашкар хулинчи 6-мёш участкăри (центр Кинотеатрта) Суйлав Комиссийён адресё çапла: Кино-театр, йăлăлти хутлăх. Телефон № 1—91

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ.

Промкооперации системин бухгалтери учочё ёçёсене пёлекенсем

4 бухгалтер-ревизор

васкавлă кирлё

Условиесене паллашма çак адресла пымала: Шупашкар, Кадыков урамё, 7—9, Телефон № 3-22.

3—1 Чăвашкуçпромсойуз.

Чăвашавтогужтреста

Шупашкарта ёçлеме

АСЛĂ БУХГАЛТЕР тата 2 бухгалтер КИРЛЁ

Чăваш АССР Сутёç Халăх Комиссариачё

Кăçалхи нойабёрён 15-мёшёнчен пуçласа Шупашкарта шкул çулне ситмен ачасене воспитани паракан работниксене хатёрлемели СУЛТАЛАКЛĂХ КУРС УÇАТ. Курса туллимар вăтăм шкул программи чухлё вёреннисене, 17 çултăн иртнисене илеççё.

Заявлени çумне çак документсем кирлё:

1. Малтан вёренни çинчен.
2. Хăш çулта çуралнине кăтартакан хут.
3. Сывлăх пирки свидетельствă.
4. Ăçта ёçлени çинчен справкă.
5. Икё фотокарточкă.

Курсантсене стипенди тата хватер параççё.

3—2. Чăваш АССР Сутёç Халăх Комиссариачё.

„РОССНАБФИЛЬМ" *трестăн Чăваш кантурё*

Чăваш АСС Республикёнчи кино-театрсен экранё çине çак фильмсене кăларать:

Саслă, илемлё, оборонăлă çёнё фильм

„НЕУСТРАШИМЫЕ"

„Лентехфильм" студийё тунă.

Режиссер АНЦИПОЛОВСКИЙ.

Саслă, илемлё çёнё фильм

„КАРО"

„Арменфильм" студийё тунă.

Сценарий автăрёсем—Тайиç тата Ай-Артйан.

Режиссер—АЙ-АРТЙАН.

Совет авиацийё çинчен кăтартакан

çёнё, илемлё, документлă фильм

„БОГАТЫРИ РОДИНЫ"

„Союзкинохроника" трестăн Москвари студийё тунă.

Режиссерсем—Варламовпа Киселёв.

Фильмри йурăсен сăмахёсене поэт-орденоносец В. Лебедев-Кумăч сырнă.

Музыкă Ф. Дунайевски композитăрăн. 3—2

„Чăваш Коммунё" сырăнса илмали хаксем: 12 уйăха — 30 т., 6 уйăха — 15 т., 3 уйăха — 7 т. 50 пус. 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Аçсырăйёсене кайала панаççё.

Уполномоченный Чувашглавлита № 855. Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13847. ф. 58—92 см. 1—1 п. л.